ГИБДД пĕлтерет

## «Тимлĕ пулăр – ачасем!»

Кашни çулах çак ятпа иртекен операци кăçал майăн 17-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 13-мĕшĕччен пырать. Ку çуллахи вăхăтра çул-йĕр çинчи инкексем ачасем хутшăннипе сахал мар пулнипе çыхăннă. Кăçалхи 4 уйăх хушшинче республикăра акă 16 çул тултарман ачасем хутшăннипе çулсем çинче пурĕ 39 инкек пулнă. Вĕсенче 40 ача суранланнă. Пирĕн районта та кун пек тĕслĕх пулнă.

Операци вăхăтĕнче районта тĕрлĕ профилактика мероприятийĕсем ирттерме палăртнă. Çак кунсенче район территорийĕнче вырнаçнă лагерьсенче, шкулсенче ачасемпе тĕл пулса ятарлă каласусем ирттересси – операци вăхăтĕнче пурнăçламалли профилактика ĕçĕсен пĕр пайĕ. Машинисем çинче ачасене лартса çӳремелли ятарлă креслосем пурри çине, хăрушсăрлăх ременĕсемпе кăкарăннине те тимлĕ тĕрĕслеме палăртнă.

Аслисен вара çул çинче йĕркене пăхăнса çӳремелли çинчен ачасене асăрхаттарма манмалла мар. Çуллахи вăхăтра ялсем çумĕпе иртекен асфальт çулсем çинче велосипедпа ярăнакан ачасене кашни кунах курма тӳр килет. Уйрăмах каç енне. Çул çитмен ачасемшĕн яваплă пулнине ашшĕ-амăшĕн манмалла мар. Çулсем çинче тимлĕ пулăр!

**А. ЩЕРБАКОВ, районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕ.**

## Хăрушă инкекре пиллĕкĕн вилнĕ



Тунти кун районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчен хурлăхлă хыпар çитрĕ.

«Майăн 23-мĕшĕнче, çĕрлехи 1 сехет çурă тĕлĕнче «Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск» автоçул çинче инкек пулни çинчен районти шалти ĕçсен пайĕн дежурнăй чаçне пĕлтерчĕç, – каласа парать районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Волков. – Эпир çийĕнчех шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов ертсе пыракан ушкăнпа выçăна çитрĕмĕр. Çулăн 14-мĕш километрĕнче хăрушă авари пулнă. Икĕ машина çапăннипе водителĕсем тӳрех вилнĕ. ВАЗ-21099 машинăри 3 пассажирăн пурнăçĕ те çакăнтах татăлнă. Тепĕр пассажирăн пурнăçне сыхласа хăварассишĕн халĕ Муркашри тĕп больницăри реанимаци уйрăмĕнче медицина ĕçченĕсем тăрăшаççĕ».

Авари вырăнĕнче тишкерӳ тунă хыççăн çакă палăрнă: пĕр машинăн водителĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан 29 çулхи арçын пулнă. Ăна машинăпа çӳрес ирĕкрен 2012 çулхи март уйăхĕччченех хăтарнă, хăй вара урăх çыннăн водитель удостоверенийĕпе пулнă иккен. Тепĕр машинин рулĕ умĕнче те, пассажирĕсем те пурте Шетмĕпуçĕнчен пулнă. Пĕтĕмпе пиллĕкĕн. Ку машина водительне те, 24 çулхи каччăна, машинăпа çӳрес ирĕкрен кăçалхи июнĕн 27-мĕшĕччен хăтарнă пулнă. Урăх çыннăн машинипе çаплипех çула тухнă вăл. Машинăра вара 1990-1991 çулсенче çуралнă хĕрсем тата пĕр каччă пулнă.

Çĕрлехи шавлă пурнăç хăвăртлăха юратать, никама та шеллемест. Çакна çамрăксен манас марччĕ, ашшĕ-амăшĕн тимлĕ те витĕмлĕ сăмахлă пуласчĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: çак «тимĕр купинче» çăлăнса юлма майĕ пулман çав.**

Наци проекчĕ

## Программа ĕçлет, анчах сывлăхĕ хамăр алăра

«Сывлăх» наци проекчĕ çынсене юрăхлă, пахалăхлă тата техника енчен лайăх аталаннă медицина пулăшăвĕпе тивĕçтерессине тĕп вырăна кăларса тăратать. Çапла çеç сывлăх сыхлавĕнчи ыйтусене татса пама, çынсем чирлессине чакарма, демографи лару-тăрăвне лайăххатма май пурçке.

Пирĕн районта çак тĕллеве пурнăçласси çыхăннă пĕр пай вăл «Муркаш районĕнче 2008-2011 çулсенче социаллă пĕлтерĕшлĕ чирсене асăрхаттарасси тата вĕсене хирĕç кĕрешесси» тĕллевлĕ программа пурнăçланса пыни. Çак программа тĕрлĕ енлĕн ĕçлесе пырать. Программăн пĕр енĕ вара туберкулез чирне тупса палăртассипе, ăна сиплессипе тата ăна хирĕç кĕрешессипе çыхăннă.

Туберкулез пирĕн районта анлă сарăлнă шала кайнă инфекци чирĕсенчен пĕри пулнине Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов пĕлтĕрхи кăтартусене тишкерсе тунă докладĕнче те (çулсерен иртекен медицина ĕçченĕсен канашлăвĕнче) палăртнăччĕ. Çавăнпах тĕллевлĕ программа ĕçлени ансăртран мар.

Кăçал та районти тĕп больница март-апрель уйăхĕсенче «Шурă ромашка» акци ирттернине малараx пĕлтернĕччĕ. Мĕнле пĕтĕмлетӳ тума пулать-ха ун хыççăн?

Пирĕн хушăра сывлăха мала хуракансем пурри кăмăла кăшт хăпартрĕ темелле: хăшĕ-пĕри медицина ĕçченĕсен сĕнĕвĕсене, канашĕсене шута илни курăнчĕ. Вĕсем шăпах флюорографи тăрса çак хăрушă чир пуррипе çуккине тĕрĕслеттерме тăхтаса тăмарĕç. Пурĕ вара районти 1458 çын çак тапхăрта флюорографи тĕрĕслевĕ витĕр тухрĕ.

Пирĕн хушăра çак хăрушă, вăхăтра сипленмесен леш тĕнчене ăсатакан чир пуррине никамăн та ĕненес килмест пулĕ, паллах. Çак чир тӳрех палăрманнипе ĕнтĕ туберкулез çаклатнă çын та малтанах хăй чирленине сисмест, ĕненмест те. Çавăнпа та эпир флюорографи тĕрĕслевне çулталаса пĕр хутчен ирттермеллине аса илтерсех тăратпăр.

Шел пулин те, уйăхлăх вăхăтĕнче туберкулезпа чирлекенсене çĕнĕрен тупса палăртнă тĕслĕхсем сахал мар пулчĕç. Пĕр çын чире пула вилĕмрен хăтăлаймарĕ.

Туберкулез чирне социаллă чир тесе ахаль каламаççĕ. Апла пулсан хамăрăн пурнăç условийĕсене тишкерсе сывлăх хамăр алăра пулнине манас марччĕ.

**О. МИХАЙЛОВА, Муркашри тĕп больницăри фтизиатр.**

Шалти ĕçсен пайĕнче

## Наркотик серепине лекес марччĕ

Наркотик тата психотроплă вещество тени вĕсен хăрушлăхне ăнланакан кашни ăслă-тăнлă çыннах пĕр шухăшсăр хăварма пултараймасть. Пирĕн тăрăхра ытларах тухне вара наркотик пахчари мăкăньрен пуçланать. Шăпах çавăнпа та ĕнтĕ «Мăкăнь – 2010» ятпа иртекен ятарлă операци майăн 14-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 31-мĕшĕччен пырать.

Çак операци Раççейри Шалти ĕçсен пайĕн министерствине çирĕплĕнтĕ тăрăх тĕрлĕ вăй структурисемпе тачă çыхăнса иртет. Ӳсен-тăран наркотикĕсемпе тăвакан саккунсăр суту-илӳ çаврăнăшне хирĕç кĕрешесси, вĕсене саккунсăр майпа акса ӳстернине тупса палăртасси тата ăна пĕтересси, çак тĕлĕшпе йĕркене пăсакансене явап тыттарасси – операци тĕллевĕ.

Мăкăнь çум курăкĕ пекех ӳсет, анчах та Раççей Федерацийĕн Уголовлă кодексĕн 231 статйипе килĕшӳллĕн мăкăне тата кантăра ӳстернĕшĕн штраф парса явап тыттарма ирĕк пур: 300 пин тенкĕ е éç укçин тата ытти майпа туса илекен тупăшăн темиçе калăпăшĕ таран, çавăн пекех 2 çулччен ирĕкрен хăтарасси те. Административлă майпа айăпласси пирки те аса илтерес килет. Административлă право нормисене пăснин кодексĕн 10.5 статйинче çакăн пирки ăнланмалла çырса панă. Наркотик шутланакан ӳсентăрана çын кăкласа пăрахмасть пулсан ăна 1500-2000 тенкĕ штраф пама саккунлă ирĕк пур, должноçри çынсене – 3000-4000 тенкĕ чухлĕ, пурлăх тытакан, хăй халлĕн ĕçлекенсене – 30000-40000 тенкĕ чухлĕ.

Наркотика саккунсăр майпа илни, ăна упрани, вырăнтан вырăна куçарни те йĕркене пăснисем шутланать. Çапла вара УК 228 статйипе килĕшӳллĕн çакăн йышши преступленисем тунишĕн явап кĕтет. Наркотиксемпе усă курма ятарлă вырăнсем (притон теççĕ вĕсене) тытса тăракансене те, унта ушкăнпа наркотикпа усă куракансене те саккун тăрăх ирĕкрен хăтарма право пур: тытса тăракансене – 4 çулччен, усă куракансене – 3-7 çуллăх.

«Мăкăнь – 2010» операци вăхăтĕнче «Вилĕмпе ăçта сутă тăваççĕ? Пĕлтер» ятлă ятарлă акци иртет. Çак акцие эпир наркотиксемпе саккунсăр майпа суту-илӳ тăвакансене хирĕç кĕрешессипех ирттеретпĕр. Граждансем кирлĕ информацие тивĕçтерме пултарнине шута хурса вĕсен пĕлтерĕвĕсен анонимлăхне шантаратпăр. Наркотиксемпе усă куракансене сисетĕр пулсан, мăкăнь пухса çӳрекенсене асăрхатăр пулсан, наркотиксем хатĕрленине пĕлетĕр пулсан пирĕн пата шăнкăравлăр. Акци вăхăтĕнче «шанчăк телефонĕ» ĕçлет. Унăн номерĕсем: 62-8-79, 62-9-60, 02.

Кашни çыннах хамăрăн хăрушсăрлăхшăн тăрăшсан çеç лăпкă пурăнма пултарнине ан манăр.

**О. ПОТРЯКОВ, районти шалти ĕçсен пайĕн уголовлă шырав уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Спорт

## Юнкăсем малта

Ярапайкассинчи вăтам шкул стадионĕнче кăçалхипе пиллĕкмĕш хут Лоцмановсен кубокне çĕнсе илессишĕн футбол ăмăртăвĕ иртрĕ. Майăн 22-мĕшĕнче, хĕвеллĕ те янкăр кун 5 команда вăй виçрĕ. Куракансем питĕ нумайăн пухăнчĕç. Вăйăсем интереслĕ иртни вĕсен кăмăлне хăпартни палăрчĕ. Кашни команда юлашки минутчченех пĕтĕм вăй-хала парса ăмăртрĕ.

Иккĕмĕш çул ĕнтĕ çĕнтерӳçĕ ятне Юнкă шкулĕн команди тивĕçрĕ. Калайкасси шкулĕн команди 2-мĕш вырăна, Орининсем 3-мĕш вырăна тухма пултарчĕç. Уйрăм вылякансене çаксене палăртрĕç: Руслан Хисамутдинов (Калайкасси), Евгений Садонский (Ярапайкасси) тата Александр Ильин (Юнкă). Призлă вырăн йышăннисене тата номинацисенче мала тухнисене укçан парне парса хавхалантарчĕç, дипломсемпе чысларĕç.

**Н. ИВАНОВА, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методисчĕ.**

## Çăлса хăварнăшăн пысăк тав

Эпир хаçат урлă Г.М. Огурцов тата С.М. Васильев хирургсене, Ю.А. Корольков анестезиолога тав сăмахĕ каласшăн. Пирĕн ачана, мăнука – Хорнуй ялĕнче пурăнакан Юрий Ильина йывăр операци туса ура çине тăма пулăшрĕç вĕсем. Юра паян хăйне лайăх туйнишĕн çак шурă халатлă ĕçченсем умĕнче пуç таятпăр. Чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе те тав туса малашне те çынсене сиплеме, вăхăтра пулăшу пама вăй-халĕсем çитсе пычăр, сывлăхлă пулччăр. Çемйисенче телейпе килĕшӳ хуçаланччăр.

**Ильинсен çемйи. Хорнуй ялĕ.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» требуется главный бухгалтер.**
**Требования:**
**– высшее профессиональное (экономическое) образование,**
**– стаж финансово-бухгалтерской работы не менее 5 лет,**
**– знание 1С Бухгалтерии и делопроизводства.**
**Краткое резюме – на факс: 62-1-36.**

выдаем на выгодных условиях
ЗАЙМЫ
работаем с пайщиками
с.Моргауши, ул.Чапаева, 44а/2
6-23-10, 8 927 667-48-92
КПКГ "КАПИТАЛ"
Св-во гос.рек. 21 № 001329502 от 26.05.04г.
выгодные % ставки

**ЗАО МСО «Моргаушская» предлагает:**
**– одно-, двухкомнатные квартиры;**
**– блоки керамзитобетонные пропаренные, ветеранам ВОВ – скидки!**
**Обращаться по тел.: 63-1-19, 69-8-59.**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, 9А (в здании редакции).**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 2-5.**

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши, площадь 51,1 кв. м., индивидуальное отопление, гараж.**
**Тел.: 8-937-383-61-33, 8-905-199-90-84.**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории«земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:031001:426, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:031001, для организации добычи, хранения, переработки и реализации рыбной продукции, площадью 1012 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

**Бетон, раствор любых марок. Песок, гравмасса, щебень, ЖБИ, асфальт. Организация доставки. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-66-88-778, 8-927-668-84-40. 22-38.**

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 1-8.**

**Иккĕ пăрулана хура-шурă тĕслĕ ĕне тата çурхи тулă сутатпăр. Тел.: 89051996177. 2-2.**

**28 мая с 9-00 до 18-00 часов в Моргаушском ДК продажа обуви Ульяновской, Белорусской фабрик. Весна – лето.**

**Требуется продавец.**
**Тел.: 8(8352)35-10-83, 67-21-37. 2-2.**

**Июль уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Хорнуй ялĕ.**
**Тел.: 63-1-26, 8-927-846-21-54.**





Нискассинчи вăтам шкулти вĕрентекенсен тата вĕренекенсен коллективĕ кунта 9-мĕш класра вĕренекен

**ЯРАВАЙКИНА Юлия**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Мăн Сĕнтĕр больница коллективĕ кунта медсестрара ĕçлекен Н.А. Кузнецовăн юратнă мăшăрĕ

**Александр Алексеевич КУЗНЕЦОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 25.05.2010 г.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.